**Пилĕк пĕртăван**

Пĕр алари пӳрнесем
(Ай, камитле тамаша!)
Пухăнчĕç тет канаша.
Пуç пӳрнийĕ калать тет:
— Эх, хурасчĕ-çке кăвас,
Эп кулач çиме хавас...
Шĕвĕр пӳрни калать тет:
— Çăнăх чĕптĕм те çук-çке…

Чи вăтари калать тет:
— Кӳршĕн пур янтти... Каяс,
Кăшт кивçен ыйтса пăхас.

Ятсăр пӳрни калать тет:
— Вĕçсĕр кивçен ыйтасси...
Йывăр ӳлĕм парасси...

Хай, Качийĕ калать тет:
— Кирлĕ мар пире янтти,
Çук янттин пачах тути!
Çур çитсессĕн — тул акас,
Кĕр пулсан — пухас, çапас,
Шур арманта авăртас,
Ик чĕрес кăвас хурас,
Пĕлĕм-сĕлĕм пĕçерес,
Шур кулачне сиктерес.
— Ай, чăнах, ай, чăнах,

Çав Качи пиртен ăслах! —
Терĕç харăс пӳрнисем,
Пĕр алăри тавансем.
— Атьăр шăкал кар тăрас,
Виç ана сар тул акас.
Сар кулачă ун чухне
Кӳрĕ сĕтел илемне.

*Ахун, В. Пилĕк пĕртăван : [сăвă] / В. Ахун // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 223-224.*